# ЯПАЛА ЯЧӖСЕМ. ПӖТӖМЛЕТӲ УРОКӖ.

## УРОК ЭПИГРАФӖ:

***ЮЛТАШПА – ВӐЙСӐРРИ ТЕ ВӐЙЛӐ.***

- 00 – 00 - 00

***Икĕ юпана уйăр***

çыру кĕнеке тухăç хаçат юманлăх çăлтăр сĕтел пĕлӳ

пăта вăрман пахчаçă пĕлĕт илемлĕх парне калав шанчăк

Иккĕмĕшле я.я. Пĕрремĕшле я.я.

## ***Кирлĕ падежа ларт***

**Тусшăн, аннерен,парнесĕр, циркра, ача, пиччене,юлташпа, кушакăн**

**Тĕп ________**

**Камăнлăх________**

**Пару_____________**

**Вырăн__________**

**Тухху______________**

**Пĕрлелĕх________**

**Çуклăх___________**

**Пирке___________**

ача

кушакăн

пиччене

циркра

аннерен

юлташпа

парнесĕр

тусшăн

# Çак сăмах вăчăринче япала ячĕсем туп

**пăташăпатакарчашăк**

Шăнкăрчпа çерçи çаплах пĕр-пĕрне парăнмаççĕ. Хăйсем кайăк чĕлхипе тем чĕвĕлтетеççĕ, çуркуннехи таса сывлăшра вĕсен сасси ян-ян каять. Унччен те пулмасть, шăтăк умĕнче ларакан çерçи вĕçсе кайрĕ. «Аха, парăнчĕ!»- шутларăм эпĕ хĕпĕртесе. Çук, иккен, ун вырăнне тепĕр çерçи йышăнчĕ. Нумай –и, сахал –и, пирĕн вĕлле патне пĕр кĕтӳ çерçи пуçтарăнчĕ. Вĕсене леш çерçи чĕнсе килчĕ пулмалла. Эх, пуçланчĕ вара шăв-шав! Пĕр кĕтӳ çерçи шăнкăрч патĕнче хĕвĕшет, хăюлăраххисем ăна сăмсипе те таккаса илеççĕ. Чăтаймарĕ шăнкăрч, вĕçсе кайрĕ. Çерçисем кун хыççăн пĕр кана шавлакаларĕç те пĕрерĕн-пĕрерĕн саланса пĕтрĕç. Çурт хуçи кăна ним пулман пек вĕлле умĕнче, мăнаçлăн каçăрăлса ларать.

- Çерçи – усал кайăк, начар вăл, - хамăн шухăша пĕлтерме васкарăм аттене.

- Усалах-ши? Мана пĕрре те ун пек туйăнмасть. Мĕншĕн тесен пăх-ха эсĕ, мĕнле вĕсем туслăн пулса юлташне пулăшма пуçтарăнчĕç. Шăнкăрч вара пĕччен, ун хутне кĕме юлташĕсем килмерĕç. Кунта, ман шутпа, ачам, тăванлăх туйăмĕ, туслăх çĕнтерчĕ. Этем те çавах, пĕр-пĕрин хутне кĕрсен вăйсăрри те вăйлă, пĕччен чух вара вăйли те халсăр. Çакна яланах асра тыт, - терĕ атте.

Çерçи - воробей



Шăнкăрч - скворец



*Урок эпиграфĕ:*



# *Юлташпа – вăйсăрри те вăйлă.*

# «Япала ячĕ» кластер



Киле ĕç:

1.**«**Юлташпа – вăйсăрри те вăйлă» ваттисен сăмахĕ тăрăх калав çырăр.

2.«Япала ячĕсем» пай тăрăх тест хатĕрлĕр.

3. **Туслăх** сăмахпа синквейн çырăр.

# Рефлекси

1. **Эпĕ йывăрлăхран хам тĕллĕн тухаймарăм**

**2. Эпĕ урокра активлă пултăм, урок кăмăла çĕклерĕ**

**2. Маншăн урок вăрăм пулчĕ**

**3. Маншăн урок хăвăрт итрĕ**

**4. Урокпа кăмăллă пултăм**

**5. Маншăн паянхи урок теми йывăрах пулмарĕ**

**6. Урокри материал усăллă пулчĕ**

**7.** Эпĕ **ыттисене кăна итлесе** лартăм